**Чӗрӗ тӗвӗ**

*(поэма)*

**1**

Упа пек мӗкӗрсе ямалӑх
чӗре тени кӳтсе ҫитсен
сӗтел урисене чӑрмалӑн
пушмакӑн пуҫӗпе ирччен.
Вӑй пӗтӗ те — йӑваш та сапӑр,
Йӗркеллӗ пулӑн ирхине.
Кашни сӑмах хура шӑна пек
ӳтри кашни тар шӑтӑкне
ҫӳҫентермешкӗн пуҫласассӑн —
нимех те мар. Нимех те мар.
Мӗн пур ӳт-пӳ сурать пулсассӑн —
ыратнине кӑшт чакарма
ӳт-пӳ калӑпӑшне чакар эс.
Пуҫна аллусемпе хӗстер.
Шӑлна ҫырт. Чӑмӑртан та — лар эс.

Саватӑн канлӗхе? Чипер!
Вӑл тирӗкри шӳрпе пек — канлӗх,
тӑкмасӑр утас тен пулсан,
утту — кӑштӑртатса пымалӑх
асӑрханулла пултӑр сан.
Е ӳт-пӗвӳ тачка та лӗнчӗр,
ҫемҫе те сӗлпӗр пулмалла, —
ҫӗре ватса чулсем чӗтреччӗр
ун айӗнче — ку ӳт, паллах,
чӗвен тӑмасть вӑл. Карӑнмаҫҫӗ
шӑнӑрӗсем. Вӗри хӗмсем

ӳтре чĕлтĕртетçе хыпмаççĕ.
Симметри саккунне сиссе
хăех тепĕр енне куçать вăл —
шĕвек ӳт-пӳ. Куçать — юлхав.
Хăй те сисмесĕрех упрать вăл
турилккери лăпкăлăха.

Ху канлĕхне çапла тирпейлĕн
упраканскер! Утту пĕртте
ан улшăнтăр, ялан илемлĕ,
этем утти пек тӳрĕ те
сулмаклă пултăр, ан чĕтретĕр
тесен — эс тух çынсем патне,
пĕлтер — ăшра мĕн кӳтнине те
ӳте туртса ыратнине
мĕн пур саспа!
Анчах çынсем
алла — ал пама мар тытаççĕ,
сан аллуна каллех вĕсем
ал таппине тытса пăхма çеç
пырса хыпашлĕçĕ тесен —
ан тух!..
Килĕсенче тирпейлĕн
сан ал таппи шăпланасса
кĕтекенсем — сăпайлăн, меллĕн
шур перчеткисене хывса
ан пусчăр сан енне пĕр утăм,
ан çулăхчăр тесен — ялан
сан хăвăн ирĕклĕ те çутă,
илемлĕ, çӳллĕ пулмалла!

**2**

Такам каланӑ: пурнӑҫ — тӗлӗк...
Ҫук! Эп — ун чӗрӗ ҫутинче!
Шӗлепке мар, хӑлхаллӑ ҫӗлӗк
пасартӑр манӑн пуҫ ҫинче —
кашни утӑмранах тирпейлӗн
хывас пулсассӑн та ӑна —
эп йӑнӑшмӑп: чӑн-чӑн чӗреллӗ
чӑн-чӑн ҫынна, гражданина
чыслатӑп — ят-шывне пӗлмесӗр!

Енчен те эпӗр йӑнӑшсан —
хӑш чух хисепӗмӗр чӗресӗр
мӗлкесене тивес пулсан —
Руҫ талккишпе — сенкер те хулӑн
юр айӗнче — вӗриленсе —
тапаҫҫӗ — итлӗр! — ыратуллӑн
пирче пуҫланӑ чӗресем.

Ҫапла, куллӑрсене пытарӑр:
эсир илтместӗр вӗсене.
Смоленск тӑпри шӑлса хӑварнӑ
салтак чӗри сас панине
вун виҫӗ ҫул тӑнлатӑп эпӗ.
Енчен эп шӑпланас пулсан —
вӑл ҫиллӗн тапнине илтетӗп.
Канать вӑл — ман чӗре тапсан.

**3**

Тӗнче Пуррин ҫути эс — маншӑн.
Куҫа ҫак ҫутӑ шартнӑ чух,
кун-ҫулӑмра калас сӑмахшӑн
санран кирли эп тупас ҫук.

Сан йышунта пӑшӑлтататӑп
ҫакна эп хурлӑ ӑшӑмра.
Пӗр саншӑн ҫеҫ айван курнатӑп
кичем, талпас калаҫура,
ӗҫме сӗнсен «тавсси» теетӗп
ҫак йыш пӗлмен-курманнине...
Шавра эп — шӑплӑха итлетӗп,
«Кама калам чун хурлӑхне?..»
Анчах — итлер-и халь ак манӑн
кӳрше — ҫак вӑрӑм йӗкӗте, —
кирек хӑш вӑхӑтра каланӑ
кирек мӗнле сӑмахӗ те
хӑть камшӑн та ҫемҫе те лайӑх,
юравлӑ тухтӑрччӗ тесе,
тутисене ялан сӑпайлӑн
ачаш ача пек йӗпетсе,
хӑй те туймасӑр пур эртелшӗн
пӗччен тертленекен этем —
вӑл — кайӑксем пек алӑсемшӗн
ӗҫме сӗнет. Ӗҫер-и, тен?

Анчах — ун пек алсем курман эп.
Хӗл варринче ӗне кӳлсе,
тӗл-тӗл кӗренленсе хуралнӑ,
кӳтсе тӑртаннӑ алӑсем

пĕрре те кайăксем пек марччĕ.

Çил — витеретчĕ шăм-шака.
Хул-çурăм сурнинчен чухлатчĕç
хĕрарăмсем çанталăка.
Пĕр авăртан пăтавккана та
çав çул тулатчĕç улмасем.
Шăн çĕр çыпăçнипе ытла та
шултăраланнăччĕ вĕсем.
Каçарăр та — унта курсаттăм
çара аласене, хура
Аласене çеç!..
Эй, хăватăм,
шалти сăваплă ăнкăрав,
чун илтĕвĕ! — упра чĕр халлĕн
тăван асапăн сассине!
Мĕнле сăмах пусарĕ халĕ
асри салху сăмахсене?
Ăру ахлатнă пек, тапранчĕ
анне юрри ман асăмра, —
çĕкленчĕ... Ӳкрĕ те аманчĕ
Садра... Чунра... Кунти йышра.
Каларĕ тейĕн: ăшăнаймĕç
шăнса пăрланнă кайăксем...
Асра та халь çамрăкланаймĕç
тăван хĕр-арлăх сăнĕсем.
Чун кăлăпăшĕ пек упранĕ
çак юрă, шăппăн ыратса,
ăна тăнланă май, сăнланĕ
асри куç курăмне шартса,

выç ял... Выç кĕр... Асри,—
мĕн пурĕ, —
ялан — выç сăн пек хураскер.
Вил тĕслĕ — Çеçпĕлĕн «шыв-юрĕ»
ун кайăкне пытарнăскер...

**4**

Тĕнче Пуррин çути эс — маншăн..

Ашра анчах çакна калам.
Кунта эп — урăхла сăмахшăн.

Ан тив, эп сирĕнпе пулам
яка хут укçасем тултарнă
йăп-йăпăркка кĕсье тĕпне
ирĕксĕртен пырса çакланнă
тусанлă пăхăр вырăнне, —
мĕн пур саспа янрасчĕ унăн —
нимпе те çапăнмалăх çук.

Салху ирпе лăс çумăр çунăн,
контрабассем сĕрленĕ чух —
ан тив, пулам эп чĕмсĕр çекĕл,
тум-тир çеклийĕ вырăнне, —
плащпа кашне те явлăк çех-и —
пулать çакмашкăн ун çине
плащран кăшт йывăр япала та.
Ĕшенмĕ аллăм — йывăра
çакмаççĕ алăран нихçан та.

Ача чухне эп Атӑлра
ула кушак ҫури курсаччӗ.
Тем ҫакнӑччӗ ун мӑйӗнчен.
Тинкертӗм — чул хура курнатчӗ...

**5**

Питех сухал та тӗксӗмлетнӗ,
ҫапах та камшӑн та пулсан
пулас килет алла вӗрентнӗ
упа ҫури пек хушӑран.
Эп хам вӑя шанми пулсассӑн,
вӗчӗхӳ ҫеҫ юн таппинче
хӗрхӳн йӳҫмешкӗн пуҫласассӑн,
ӳт-тир сисмелӗх пит ҫинче
вӗри куҫсен мускулӗсем
йывӑрланса туртӑннине те
туймалӑхах пулса ҫитсен —
епле пулин те, кам патне те
пулин — каҫпа е ирхине —
сӑлтавсӑр-мӗнсӗрех кӗресчӗ,
вӗри вителӗкӳ ҫине
ҫил шӑнтнӑ пуҫӑмпа ӳкесчӗ.
Сан аллусен вӗрилӗхне
туясчӗ ҫеҫ... Вара — ҫитет те:
каллех пӗлетӗп — эс шанан.
Эс маншӑн Атӑл та; анне те,
ҫӗр-шыв пек кирлӗ эс мана.

*1954–1956, Мускав*

*Айхи, Г. Чӗрӗ тӗвӗ : [поэма] // Айхи, Г. Сӑвӑсемпе поэмӑсем / Г. Айхи. – Шупашкар, 1994. – С. 43-48.*